# Çĕнтерӳ ялавĕ

Муркаш район хаçачĕ

1944 çулхи майăн 5-мĕшĕнчепе тухать

17 (7442) № * Юн кун, 2007 çулхи февралĕн (нарăс) 28-мĕшĕ * Хакĕ ирĕклĕ


**Рйонти выльăх пăхакансен экономика ăмăртăвне пĕтĕмлетсе**

## Пулар маттуртарах, çунатлăрах

2006 çул хыçа юлнă май ăна пĕтĕмлетес ĕççем пур отрасльсенче те анлăн пыраççĕ. Вĕсенче чипер те маттур, ĕçчен те тараваt, пуян опыт пухнă ĕçченсем хăйсен çулталăк хушшинчи ĕçне-хĕлне тĕплĕ тишкерсе, пурнăç уттинчен çывăрса юлас мар тесе çиччĕ виççе пĕрре касса аталану çулĕн умри черетлĕ тĕллевĕсене палăртаççĕ.




Иртнĕ юн кун, нарăсăн 21-мĕшĕнче, район администрацийĕн ларусем ирттермелли залĕнче выльăх-чĕрлĕх пăхассипе районшăн тĕслĕх пулса тăракан ĕçченсене чаплă лару-тăрура чысларĕç. Çакна уйрăм хуçалăхпа район аталанăвĕшĕн ĕçлекен çын тивĕç те. Ферма ĕçченĕсен тăрăшулăхĕпе пĕлтĕр районта усă куракан 100 гектар çĕр пуçне 302,9 центнер сĕт, 67,1 центнер аш-какай туса илнĕ. Ку вăл, пĕтĕмĕшле кăтарту пулсан та, республикăра малтисен ретĕнче. Уйрăм ĕçченсемпе ĕç коллективĕсем, хуçалăхсен тĕслĕхĕсем çинче илсен, вăл куç умне татах та сумлăрах тухать. Акă, иртнĕ çулхи экономика ăмăртăвĕнче "Свобода" хуçалăх çĕнтерчĕ. Кунти Кашмашри сĕт-çу фермипе Кашмашри сысна ферми те ăмăртура 1-мĕш степеньлĕ дипломсене тата "Чи лайăххи" ятсене тивĕçрĕç. Сăн ӳкерчĕкре эсир район пуçлăхĕ Ю. Иванов Кашмашри сысна фермин заведующине В. Никитина дипломпа куçса çӳрекен вымпел панине куратăр.

**А. БЕЛОВ сăн ӳкерчĕкĕ.**

**Шалти ĕçсен министрĕ пулчĕ районта**

## Раççей Геройне халалласа

Тивĕшри пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан вăтам шкулта Раççей Геройĕн Е. Г. Борисовăн парнисене çĕнсе илессишĕн минифутболла выляссипе ăмăрту ирттересси юлашки çулсенче ырă йăлана кĕчĕ. Кăçал республика шайĕнче иртекен çак ăмăртăва Чăваш Республикин шалти ĕçсен министрĕ В. В. Антонов та хутшăнчĕ. Вадим Валентиновичпа пĕрле Тивĕше Афганистан, Чечен вăрçин, ЧР Шалти ĕçсен министерствин ветеранĕсем килчĕç. Тăван шкулта хăйĕн парнисемшĕн ирттерекен ăмăрту мĕнле-ха тата Раççей Геройĕсĕр Евгений Борисовсăр ирттĕр?

Хăнасане район пуçлăхĕ Ю.А. Иванов, районти вĕрентӳ, çамрăксен политики, физкультурăпа спорт пайĕн пуçлăхĕ Л.И. Мочалов тата ыттисем кĕтсе илчĕç. Чи малтанах Тивĕш шкул директорĕ В. А. Федотова шкул ĕçĕ-хĕлĕпе паллаштарчĕ. Унтан хăнасем Е. Г. Борисов ячĕллĕ патриотика клубĕн залĕнче, компьютер класĕнче пулса курчĕç. Евгений Борисов хăй ларнă парта хушшине çĕнĕрен ларса курчĕ. Хăй Евгений Германович каланă тăрăх, физкультура урокĕсем çăмăлах марччĕ уншăн. Вĕрентекенĕ çирĕп ыйтнăран.

Паян вара Раççей Геройĕ хăй те çакна лайăх ăнланать: шăпах физкультура урокĕсенче йывăрлăха çĕнтерни уншăн Çурçĕр Кавказра службăра тăнă



чух вилĕме çĕнтерсе Раççей Геройĕ пулса тăма пулăшрĕ. 1998 çулта çара кайнăскер, 2000 çулхи февралĕн 21-мĕшĕнче Раççей Федерацийĕн Президенчĕн Указĕпе килĕшӳллĕн Çурçĕр Кавказри саккуна пăсса йĕркеленнĕ çар формированийĕсене пĕтернĕ чух тунă хăюлăхпа паттăрлăхшăн Раççей Геройĕн ятне, "Ылтăн çăлтăр" медале тивĕçет. Район пуçлăхĕ Ю. А. Иванов хăйĕн сăмахĕнче 20 çултах çĕршыв Геройĕ пулса тăма çăмăл маррине палăртрĕ, пурне те ентешĕмĕр пек маттур пулма сĕнчĕ.

– Çĕршыв вăл – унта пурăнакан çынсем, - терĕ Вадим Валентинович ăмăртăва уçнă май. Пурне те ЧР Президенчĕ Н. В. Федоров ячĕпе Çĕршыв хӳтĕлевçисен кунĕ ячĕпе саламларĕ, спорт ăмăртăвĕнче ăнăçу тума ырлăх-сывлăх сунчĕ:

– Пурнăçра паттăрлăх валли вырăн яланах тупăнать, - терĕ вăл. Раççей Геройне Е.Г. Борисова "За верность долгу и Отечеству" медальпе наградăларĕ, ăмăртăва хутшăнакансене спортра та, пурнăçра та йывăрлăхсене çĕнтерме ăнăçу сунчĕ.

Ăмăртăва хутшăнакансене çавăн пекех Раççей Геройĕ Е. Г. Борисов, запасри майор Г. П. Матвеев саламларĕç.

- Спорта юратăр, малтанхи çĕнтерӳсем унран пуçланччăр, - тесе район пуçлăхĕ Ю.А. Иваноа вăйă пуçлама çĕнĕ футбол мечĕкĕ парнелерĕ.

Кунта спорт уявне уçнă хыççăн хăнасем Муркашри Спорт çуртĕнче «Росгосстрах» парнисене çĕнсе илессишĕн иртекен ăмăртăва уçнă çĕре хутшăнчĕç, пурне те Çĕршыв хӳтĕлевçисен кунĕ ячĕпе саламларĕç, ăмăртура ăнăçу сунчĕç.

Çакна палăртмалла, Тивĕшре те, Муркашра та хăнасем Аслă Отечественнăй вăрçăра пуçĕсене хунисене асăнса лартнă палăксем умне чĕрĕ чечексем хучĕç.

**Л. ТУКТИНА.**

**Пĕрлехи информаци кунĕнчен**

## Ыйтусене туллин хуравларĕç

Иртнĕ юн кун республикăра Пĕрлехи информаци кунĕ иртрĕ. Çавна май пирĕн райна ЧР Патшалăх ветеринари службин ертӳçи В. К. Тихонов, ЧР вĕрентӳ, çамрăксен политикин министрĕн çумĕ М. Ю. Толстов, РФ ПФ Чăваш Республикинчи уйрăмĕн – патшалăх учрежденийĕн управляющийĕн çумĕ А. П. Иванов, "РФ Юстици министерствин суд экспертизин Чăваш Республикинчи лабораторийĕ" патшалăх учрежденийĕн ертӳçи Л. П. Морозов килчĕç. Чи малтанах вĕсем район пуçлăхĕпе Ю. А. Ивановпа тĕл пулчĕç. Унтан 4 ушкăн çине пайланса ял тăрăхĕсене çитрĕç, вĕсенчи ĕç коллективĕсемпе тĕл пулчĕç. Палăртмалла, Пĕрлехи информаци кунĕнче ЧР Президенчĕ ЧР Патшалăх Канашне янă çырăва, ЧР Президенчĕн çĕр лаптăкĕсене патшалăх кадастр учетне тата куçман пурлăх объекчĕсене патшалăх учетне илессине хăвăртлатмалли мерăсем çинчен калакан Указĕ мĕнле пурнăçланнине сӳтсе яврĕç.

Çак кун район администрацийĕн ларусен залĕнче районти выльăх-чĕрлĕх пăхакансен канашлăвĕ пулчĕ. Çавăнпа та пĕрремĕш ушкăн район пуçлăхĕпе пĕрле унта хутшăнчĕ.

Тăваттăмĕш ушкăн Хорнуй ял тăрăхĕнче пулчĕ. Унăн пуçлăхĕ В. А. Любимова кĕскен ял тăрăхĕнчи лару-тăрупа паллаштарчĕ. Унтан информаци ушкăнĕ ял тăрăхĕн администрацийĕнче вырăнти активпа тĕл пулчĕ. Тӳрех каламалла, çынсене çĕр ыйтăвĕ хумхантарни куçкĕретех. Тĕл пулура унпа çыхăннă ыйтусем çине информаци ушкăнне кĕнĕ ЧР куçман пурлăх кадастрĕн Федераллă агентствин Управленийĕн районсем хушшинчи 4-мĕш номерлĕ уйрăмĕн эксперчĕ-тĕп специалисчĕ Г. Г. Любимов тĕплĕ хуравсем пачĕ. Куçман пурлăх объекчĕсемпе çĕр лаптăкĕсене инвентаризацилессине, çĕр лаптăкĕсене палăртса виçессине, кадастр учетне илессине кăçалхи июлĕн 1-мĕшĕччен вĕçлемеллине палăртрĕ. Асăннă мероприятисене çак тапхăрччен ирттерни кашниншĕнех лайăх, мĕншĕн тесен ку вăхăтра çак ĕçе пĕчĕклетнĕ хаксемпе ирттерме условисем туса пана.

Тĕл пулура çавăн пекех ытти тĕрлĕ ыйтусем те пулчĕç.

– 2-мĕш тата малаллахи ачасемшĕн 250 пин тенкĕлĕх амăшĕн капиталне пани лайăх-ха, анчах уйăхсерен ачасемшĕн паракан пособи виçине темиçешер тенкĕ çеç хăпартнине тĕрĕсех тесе шутламастăп, - палăртрĕ хăйĕн шухăшне хĕрарăм. – Амăшĕшĕн пур ачи те пĕр пекех. Пĕрремĕш е виççĕмĕш вăл. Ачасене укçашăн çуратмастпăр, патшалăх енчен те çак ыйту çине çак куçпа пăхсан аванрахчĕ.

Тĕл пулура çавăн пекех ял çыннине ял хуçалăх продукчĕсене йӳнĕ хакпа туянни пăшăрхантарни палăрчĕ.

Унтан информаци ушкăнĕ Тойкилтĕ шкулĕнче вĕрентекенсемпе тĕл пулчĕ. Кунта та çĕрпе çыхăннă ыйтусем нумай пулчĕç. Пурин çине те тулли хуравсем илчĕç вĕсене паракансем.

Тĕл пулу çакна кăтартса пачĕ: Хорнуй ял тăрăхĕнче халăх çĕрпе çыхăннă ыйтусене вăхăта сая ямасăр татса памаллине ăнланни курăнать. Çакă ял тăрăхĕ халăхпа тачă çыхăнура пулнине çирĕплетет. Халĕ шухăша пурнăçа кĕртмелли çеç юлать.

Асăннă информаци ушкăнĕнчи " РФ Юстици министерствин суд экспертизин Чăваш Республикинчи лабораторийĕ" патшалăх учрежденийĕн ертӳçи Л.П. Морозов асăннă учрежденин ĕçĕ-хĕлĕпе те паллаштарчĕ, икĕ тĕл пулура та библиотекăсем валли хăй кăларнă кĕнекене парнелерĕ. Район администрацийĕн ĕçĕсен управляющийĕ А. В. Краснов район аталанăвĕпе паллаштарчĕ.

Тепĕр икĕ ушкăнĕ вара Тивĕш, Шурча шкулĕсенче, Катькас ял тăрăхĕнче, Калайкасси шкулĕнче, Муркашри чăх-чĕп фабрикинче пулчĕ. Тĕл пулура хускатнă ыйтусене татса памалли çула палăртрĕç юлашкинчен информаци ушкăнĕсем.

Çакна палăртмалла, малалла пĕрлехи информаци кунĕсенче районта йĕркеленнĕ ĕç ушкăнĕсем те кашни ял тăрăхĕнче пулаççĕ. Çакă вырăнсенче канăççăрлантаракан ыйтусене вăхăтра палăртса татса пама май парать.

**Л. ПАВЛОВА.**

**Кун йĕркинче**

## Ĕç паракансем çывăрасран профсоюзсем пур

Ĕçпе капитал хушшинчи тавлашу яланлăхах. Ăна вара йĕркелесе пыма пултармалла. Ĕç параканпа профсоюзăн партнерла хутшăнусенче пулмалла. Çакна палăртрĕ иртнĕ эрнере районта иртнĕ канашлура патшалăх учрежденийĕсенче ĕçлекенсен республикăри профсоюз организацийĕн ертӳçи И.А. Анисимов.

Ĕç коллективĕсенчи профсоюз организацийĕсен ĕçлекен çынсене хӳтĕлес тĕлĕшпе пуçаруллă ĕçлемелле. Коллективлă договор кунта уйрăмах пĕлтерĕшлĕ. Шел пулин те, профсоюз организацийĕ пур коллективсен 87 процентĕ кăна çак документа йышăннă.

Тивĕçлĕ ĕç укçи тӳлесси те тĕп вырăнта пулмалла. Пирĕн Президент ĕç укçине пурăнмалли минимумран кая мар тӳлемелли çинчен указ кăларчĕ. Апла пулсан профсоюз организацийĕсен ку енĕпе çанă тавăрсах ĕçлемелле.

Канашлура ĕç сыхлавĕн требованийĕсене пурнăçласси пирки те пулчĕ калаçу. Паянхи кун мĕн пур ĕçĕн 40 процентĕ сиенлĕ условисемпе çыхăннă. Кун пек ĕçсенче ытларах хĕрарăмсем вăй хураççĕ. Ĕçре инкек-синкек пуласси те йăларан тухман.

Паллах, тивĕçлĕ ĕç укçи тӳлесси те, ĕç условийĕсене лайăхлатасси те ку е вăл предприятин финанс лару-тăрăвĕпе тӳрремĕнех çыхăннă. Предприяти тупăшне шăпах ĕçлекен çынсем тăваççĕ. Апла пулсан ĕç паракансен те парăмра юлмалла мар. Профсоюзсен те шăллăрах пулмалла.

**А. ИВАНОВ.**

**Депутатсен районти Пухăвĕн ларăвĕ**

## Район Уставне улшăнусем кĕртнĕ

Февралĕн 22-мĕшĕнче район администрацийĕн ларусен залĕнче депутатсен районти Пухăвĕн черетлĕ 17-мĕш ларăвĕ иртнĕ. Депутатсем «Муркаш районĕн Уставне улшăнусемпе хушусем кĕртесси çинчен», «Муркаш районĕнче 2007-2009 çулсенче преступноçпа кĕрешессине вăйлатассин комплекслă программи çинчен» тата ытти ыйтусене сӳтсе явнă.

Ларăва депутатсемсĕр пуçне ял тăрăхĕсен пуçлăхĕсем, район администрацийĕн управленийĕсемпе пайĕсен пуçлăхĕсем те хутшăннă.

**Ыйту – хурав**

## Ĕçлеймен çынсене пăхса пурăннăшăн

**Раççей Федерацийĕн Президенчĕ 2006 çулхи декабрĕн 26-мĕшĕнче «Ĕçлеме пултарайман гражданесене пăхса пурăннăшăн компенсаци тӳлесси çинчен» 1455 № Указ йышăнчĕ. Камсене тӳлеççĕ ăна тата вăл миçе тенкĕпе танлашать? Çавăн пирки пĕлес тенĕччĕ.**

**С. СЕРГЕЕВА.**

***Ку ыйтупа эпир РФ Пенси фончĕн районти управленийĕн ертӳçин çумне, пенсисем парассин тата çĕнĕрен шутласа парссин, тӳлессин пайĕн пуçлăхне Надежда Геннадьевна СЕМЕНОВАНА паллаштартăмăр, тĕплĕнрех ăнлантарса пама ыйтрăмăр.***

– Ĕçлеме пултаракан çын 1-мĕш ушкăн инвалидне, 18 çула çитмен инвалид-ачана е тата 80 çултан иртнĕ ватă çынна, сиплев учрежденийĕ панă справкăпа килĕшӳллĕн ăна яланах пăхса пурăнакан кирлĕ тесе палăртнă çынна пăхса пурăнать пулсан, 2007 çулхи январĕн 1-мĕшĕнчен тытăнса ăна уйăхсерен 500 тенкĕ компенсаци тӳлесе тăма тивĕç.

Çавна та каласа хăварас пулать. Çурçĕрте тата унпа танлаштарнă районсенче, климат тĕлĕшпе йывăр условисенче пурăнакансем валли вĕсенчи район коэффициентне кура тӳлев виçисене ӳстерме пăхнă.

Çапла вара РФ Президенчĕн ку тĕлĕшпе 2007 çулхи январĕн 1-мĕшĕччен йышăннă указĕсемпе вĕсенчи положенисем вăйран тухаççĕ.

**Юбилей**

## *Саламлатпăр*



Тĕксĕмленсен чĕре кăварĕ,
Путсассăн тарăн шухăша,
Кулянакан анне сăнарĕ
Вăраххăн тухрĕ куç умне.

Шуркасси ялĕнчи **Зинаида Григорьевна ШУРНОВА** пуш уйăхĕн 1-мĕшĕнче 70 çулхи юбилейне пallă тăвать. Ачаран пуçласах нушине самаях куртăн. Турă çырнипе пурне те чăтса ирттертĕн.

Çуралнă кунпа пĕрле Зинаида Григорьевна мăшăрĕпе пĕрлешсе çемье çавăрни те 53 çул.

Çирĕп сывлăх, телейлĕ кун-çул сана, пирĕншĕн хаклă çыннăмăр. Кун-çулу вăрăм пултăр тата ĕмĕтӳ пурнăçланса пытăр.

Эсĕ пурри пирĕншĕн – телей.

**Саламласа: мăшăру Леонид (76 çул тултаратăп), ывăлу Борис, кинӳ Нина, тăватă мăнуку, хĕрӳ Ира тата кĕрӳ, Шурновсен нумай-нумай çемйисем, тăхлачу Х.И. Аргандеева (80 çул тултаратăп), ял-йыш, пускилсем. Хăв çуралса ӳснĕ ялти Пранькинсем (Шупашкар районĕ).**